25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
АВГУСТ
11
ЫТЛАРИКУН
186 (6121) №

# Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ

## Ҫӗнӗ те пысӑкрах ҫитӗнӳсемшӗн!

Сталин юлташӑн майӑн пӗрремӗшӗнчи приказне пурнӑҫлассишӗн пыракан Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн виҫҫӗмӗш уйӑхӗ иртрӗ. Июль уйӑхӗнче пирӗн рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем ҫӗршыв оборонине тӗреклетессишӗн, фронта пулӑшассине вӑйлатассишӗн иртнӗ уйӑхрисенчен тимлӗнрех ӗҫлерӗҫ. Фронтпа тыл пӗрлӗхӗ, вӗсен ҫапӑҫури ҫыхӑнӑвӗ татах та вӑйланчӗ.

Ҫӗршыври ҫӗршер предприятисем июль уйӑхӗнчи программӑна тултарассишӗн хӗрӳллӗн ӗҫлерӗҫ. Социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн виҫҫӗмӗш уйӑхӗнче чылай коллективсем оборудованисемпе, ресурссемпе туллин усӑ курчӗҫ, продукци пахалӑхне лайӑхлатса, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пычӗҫ,

Пирӗн республикӑри предприятисем те ҫак уйӑхра чылай лайӑхрах ӗҫлерӗҫ. Май уйӑхӗнче ВЦСПС-па пӗр наркоматӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне, июнь уйӑхӗнче Оборонӑн Государственный Комитечӗн ялавне илнӗ завод коллективӗ (директорӗ Бенский юлташ) июль уйӑхӗнче хӑйӗн обязательствисене пӗтӗмпех пурнӑҫларӗ, июньринчен 1,5 хут ытларах продукци туса кӑларчӗ. Иртнӗ уйӑхра заводӑн чылай цехӗсем талӑкри графика тӗрӗс пурнӑҫласа тикӗс ӗҫлерӗҫ, ӗҫӗн хӑвӑртлӑхӗсене ӳстерсех пычӗҫ. Ҫавӑнпа та завод коллективӗ Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне хӑйӗн аллинчех хӑварма пултарчӗ.

Анчах Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн виҫҫӗмӗш уйӑхӗн итогӗсем ҫакна та кӑтартса пачӗҫ. Куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ ялавсене илессишӗн ҫӗршывра ҫӗршер предприятисем кӗрешеҫҫӗ, ҫак кӗрешӳре вӗсем уйӑхран уйӑха лайӑхрах ӗҫлеҫҫӗ. Пӗр халӑх комиссариачӗн 330-мӗш номерлӗ предприятийӗ июль уйӑхӗнче мала тухнӑ. Ҫавӑнпа ВЦСПС-па пӗр халӑх комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Бенский юлташ заводӗнчен илсе 330-мӗш номерлӗ предприятие памалла тунӑ.

Социализмлӑ ӑмӑрту—пысӑк вӑй, унӑн тӗллевӗ—пур предприятисене те малта пыракансем пек ӗҫлеттересси. Анчах малта пыракансен те лӑпланса ларма тивмест, тунӑ ҫитӗнӳсене ӳстерсех пырас пулать.

Ҫулйӗр Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илнӗ Канашри вагонсем юсакан завод (директорӗ Поздняков юлташ) ӑмӑртӑвӑн виҫҫӗмӗш уйӑхӗнче лайӑхрах ӗҫлерӗ. Завод июль уйӑхӗнче вагонсем юсамалли плана иртгерсе тултарчӗ, вагонсем июньринчен ытларах пачӗ. Унсӑр пуҫне завод васкавлӑ заказсене те ӑнӑҫлӑ пурнӑҫларӗ. Коллектив Хӗрлӗ ялава хӑйӗн аллинчен вӗҫертмерӗ.

Иртнӗ уйӑхра Ҫӗмӗрлери комбинат (директорӗ Грибовский юлташ) тата Канатов юлташ ертсе пыракан предприяти те начар мар ӗҫлерӗҫ. Вӗсем уйӑхри программӑна ӑнӑҫлӑн тултарчӗҫ. рабочисен ӗҫ тухӑҫлӑхне, стахановецсен ретне чылай ӳстерчӗҫ, нормӑна тултарайманнисен хисепне чакарчӗҫ.

Ҫавӑн пекех Шупашкарти эрех заводӗ, пир-авӑр тата табак фабрикисем, Сӗнтӗрвӑрринчи судоверфь, районсенчи вуншар артельсемпе мастерскойсем июльри плана срокчен тата ытлашшипех тултарчӗҫ, планран ирттерсе сахал мар продукци пачӗҫ.

Ӑмӑрту кунӗсенче республикӑри чугунҫул транспорчӗн ӗҫӗ те палӑрмаллах лайӑхланчӗ. Канаш, Ҫӗмӗрле, Вӑрнар тата Шупашкар станцисем поездсене расписани тӑрӑх йышӑнса ӑсатаҫҫӗ, вагонсем ахаль тӑрассине чакарчӗҫ, таварсем тиес тата пушатас ӗҫсене хӑвӑртлатрӗҫ.

Ҫапла, пирӗн республикӑри промышленноҫпа транспорт иртнӗ уйӑхри ӑмӑртура чылай пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Анчах ӑмӑртура юлса пыракан, илнӗ обязательствӑсене тултарайман предприятисем те пур-ха. Куславкка комбиначӗ чи кирлӗ продукци туса кӑлармалли плана та тултармарӗ. Комбинатра талӑкри графика производствӑн тӗп законӗ вырӑнне хумаҫҫӗ, ӗҫре пӗрмаях кӑлтӑксем пулаҫҫӗ, продукци пахалӑхӗшӗн ҫителӗксӗр кӗрешеҫҫӗ. Улатӑрти паровозсем юсакан завод, Шупашкарти тир-сӑран комбиначӗ, вырӑнти промышленноҫӗн кирпӗч предприятийӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ.

Асӑннӑ предприятисем ҫапла юлса пыни вӗсен руководителӗсем ӗҫе вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек йӗркелесе ертсе пыманнинчен, унти парти организацисем социализмлӑ ӑмӑртӑва ҫӗнӗлле организацилеменнинчен, илнӗ обязательствӑсем пурнӑҫа мӗнле кӗрсе пынине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑманнинчен килнӗ.

Ӑмӑртура уйрӑмах ӗҫӗн результачӗсем ҫинчен пӗлтерсе тӑни тата вӗсене пӗр-пӗринпе танлаштарса кӑтартни кирлӗ. Вӑл пурне те пӗр пек ӗҫлекен тума, юлса пыракансене малта пыракансемпе танлашма пулӑшать. Анчах ҫакна республикӑри промысла союзӗсен руководителӗсем хакламаҫҫӗ-ха. Вӗсем хӑйсен системинчи артельсемпе мастерскойсен июль уйӑхӗнчи ӗҫӗсене пӗтӗҫтерсе тухман, лайӑх ӗҫлекенсене те, юлса пыракансене те палӑртман. Ӑмӑртӑва тивӗҫлипе организацилеменрен ӗнтӗ районсенчи чылай артельсем хӑйсен ӗҫ планӗсене тултармаҫҫӗ,

Партин 18-мӗш конференцийӗ: «Пирӗн промышленноҫпа транспортра юлса пыракан предприятисем пулмалла мар. Мӗнпур заводсем, фабрикӑсем, шахтӑсем, чугунҫулсем плана тултарма тивӗҫлӗ», тесе ҫирӗппӗн кӑтартса хӑварчӗ. Ҫак кӑтартӑва уйрӑмах халӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, тимлӗн пурнӑҫа кӗртсе пырас пулать.

Пирӗн юлса пыракан предприятисем анчах мар, тата малта пыракан фабрикӑсемпе заводсенче те начартарах ӗҫлекен цехсем, сменӑсем, бригадӑсем пур Вӗсем ҫинчен нихӑҫан та манма юрамасть. Кашни участокра лайӑх ӗҫлекен тӑвасси, пур рабочисене те стахановецсем таран ӳстерессӗ—хуҫалӑх, парти тата профсоюз организацисен хисеплӗ тивӗҫлӗ. Ҫавӑнпа та пур предприятисенче те рабочисене стахановецсен ӗҫ опычӗпе паллаштарас пулать, тухӑҫлӑ ӗҫлеме вӗрентес пулать. Рабочисене стахановла шкулсене явӑҫтарасси, юлса пыракансене шефа илесси, ҫамрӑксене мастерсем ҫумне ҫирӗплетесси—ҫаксем вара инженерсемпе техниксен кулленхи ӗҫӗ пулмалла.

Июль уйӑхӗнче тунӑ ҫитӗнӳсем пирӗн предприятисенче продукци ытларах туса кӑларма кирлӗ резервсем, ресурссем тата майсем пуррине кӑтартрӗҫ. Халех, пӗр тӑхтамасӑрах, вӗсемпе усӑ курмалла. Ҫапла туни чӗртаварсемпе материалсене аякран кӳрессинчен хӑтарать, чугунҫул транспортне фронт валли хӗҫпӑшал ытларах турттарма май парать.

Пирӗн инженерсен, техниксен тата мастерсен хӑйсене шанса панӑ участоксемпе коллективсене йӗркеллӗрех те ҫирӗпрех ертсе пымалла. Пориводство новаторӗсен—рационализаторсемпе изобретательсен сӗнӗвӗсене ҫийӗнчех тишкӗрсе хӑвӑртрах ӗҫе кӗртмелле.

Эпир ку таранччен тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларма пултараймастпӑр. Паян ӗнерхинчен, ыран паянхинчен лайӑхрах ӗҫлемелле!—ҫакӑн пек Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту участникӗсен задачи.

## Коммунистсемпе комсомолецсем—уборка ӗҫӗсен организаторӗсем

СӖНТӖРВӐРРИ. (Телефонпа). Районра тырпулсене пухса кӗртес ӗҫ анлӑн сарӑлчӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем вӑйлӑ тырпула ӑнӑҫлӑн пухса кӗртессишӗн тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак ӗҫре вӗсене коммунистсемпе комсомолецсем ертсе пыраҫҫӗ.

Тырпулсене пухса кӗртес ӗҫ Амачкино колхозӗнче лайӑх пулса пырать. Унта жнейкӑсемпе, лобогрейкӑпа тата молотилкӑсемпе кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлеҫҫӗ. Колхоз хӑйӗн тракторне юсаттарчӗ те халӗ трактор вӑйӗпе авӑн ҫапать. Тырӑ вырас ӗҫре кӗреплеллӗ ҫавасемпе усӑ кураҫҫӗ.

Ҫак колхоз районра пуринчен малтан ыраш вырма тухрӗ. Унта колхозниксем валли столовӑй организациленӗ, ачасене валли ясли-площадка уҫнӑ. Тырпул пухса кӗртес ӗҫре коммунистсемпе комсомолецсем ытти колхозниксене пример кӑтартаҫҫӗ. ВКП(б) членӗ Раиса Лукоянова кӗлте ҫыхнӑ ҫӗрте нормӑна 125—150 процент тултарса ӗҫлет. Парти членӗ, 54 ҫулти П. Камбулова нормӑна 100—120 процент тултарса пырать. Комсомолец Филиппов жнейкӑпа вырнӑ ҫӗрте кунне 1,5—2 норма тӑвать.

Кунти агитколлектив хӑйӗн ӗҫне аван йӗркеленӗ ВКП(б) членӗ, вулав ҫурчӗн пуҫлӑхӗ Костров юлташ агитациллӗ ӗҫе ялти мӗнпур актива явӑҫтарма пултарнӑ. Агитаторсем производствӑра стахановла ӗҫлеҫҫӗ. Кашнӑ вӑхӑтра вӗсем колхозниксене Совет Информаци Бюровӗн пӗлтерӗвӗсене каласа кӑтартаҫҫӗ, хаҫатсем ҫинчен уйрӑм статьясене вуласа параҫҫӗ, «Боевой листоксем» кӑлараҫҫӗ, кам мӗнле ӗҫленине тӗслӗхсен хӑми ҫине ҫырса пыраҫҫӗ.

Шкулта вӗренекен ачасен колхоз производствинче ӗҫлекен отрячӗсене комсомолецсем ертсе пыраҫҫӗ. Сӗнтӗрвӑрринчи вӑтам шкулта вӗренекенсем Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсене ертсе пыракан комсомолка, пионерсен старши вожатӑйӗ Косарева юлташ колхоз производствинче 25 ӗҫкунӗ, комсомол организацин секретарӗ Ефимова юлташ 15 ӗҫкунӗ тунӑ. Шкул ачисем, райсӗнпе илсен, пӗтӗмпе икӗ пин ӗҫкунӗлӗх ытла ӗҫленӗ.

Пӑчӗк Маклашкинӑри «Красная Армия» колхоз (председателӗ ВКП(б) членӗ Е. Анкудинов юлташ) кӗр тыррисене виҫӗ ӗҫ кунӗнче вырса пӗтерчӗ.

**Г. ЧУМАКОВА.**

**ВКП(б) Сӗнтӗрвӑрри райкомӗн орг-инструкторски отделӗн заведующийӗ.**

## Трактористсемпе комбайнерсем! Горючине перекетлӗн тыткалӑр. Вӑл пирӗн летчиксемпе танкистсене кирлӗ. Перекетлесе хӑварнӑ кашни 300 килограмм бензин совет танкне пӗр талӑк ҫапӑҫма ҫитет.

### Пур комбайнсене те халех ӗҫе ямалла

ҪӖМӖРЛЕ, августӑн 10-мӗш. (**Хамӑр корр.**). Районри машинно-тракторнӑй станцин пурӗ 9 комбайн пулсан, паянхи куна 5-шӗ ҫеҫ тырӑ вырма тытӑннӑ. Ытти комбайнсене «тырӑ симӗс» тесе халӗ те ӗҫе яман. МТС руководителӗсем халӗ те «симӗс» шухӑш-кӑмӑлпа ларни вӗсем колхозсене сахалтарах тухса ҫӳренине кӑтартса парать. Районри пур колхозсен уйхирӗсенче те ыраш пӗтӗм лаптӑкӑшпех пулса ҫитни пуриншӗн те паллӑ. Паянах пур комбайнсемпе те тырӑ вырма тухмалла.

Уйрӑм комбайнерсем тырӑ вырас ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. «Новая жизнь» колхозра ӗҫлекен комбайнер Михайлов юлташ ку таранса ҫитсе 50 гектар ыраш вырнӑ. Вӑл кашни кунах 14—15-шер гектар вырса пухать. Ҫавӑн пекех «Красноармеец» колхозра ӗҫлекен Чекменев юлташ та хӑйӗн комбайнӗпе 35 гектар вырнӑ. Тракторист Курочкин юлташ иртен пуҫласа каҫчен комбайнпа пӗрле тырӑ вырнӑ ҫӗрте ӗҫлет; ҫӗрле клевер ҫулса пухнӑ участокра суха тӑвать. Ҫавӑн пекех Оськин юлташ та, тырӑ вырнипе пӗрлех, каҫсерен 8—9-шар гектар суха тӑвать. Ҫӳлте асӑннӑ комбайнерсемпе трактористсем Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнассишӗн пӗтӗм вӑйя хурса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен машинисем мӗн чухлӗ пама пултарнине йӑлтах илеҫҫӗ.

Малта пыракан трактористсемпе комбайнерсен примерӗпе ыттисен те тырӑ вырас ӗҫе халех пуҫӑнмалла. МТС руководителӗсен «симӗс» шухӑша пӑрахӑҫламалла.

**Х. ЛИСИН.**

### Лысӑк тухӑҫлӑ махорка ӳстереҫҫӗ

КАЛИНИНО. Хурн Кӑкшӑмри «Красноармеец» колхоз кӑҫал чи тухӑҫлӑ махорка ӳстерсе илессишӗн тӑрӑшать.

Бригада членӗсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. 8 гектар ҫинче ӳсекен махоркӑна вӗсем икӗ хутчен мотыгӑсемпе кӑпкалатса тухнӑ, ҫумкурӑкӗсенчен тасатнӑ. М. Ефремова, В. Лукина, К. Николаева колхозницӑсем стахановецсен ретне тӑчӗҫ.

Халӗ, махоркӑна касас вӑхӑт ҫывхарса килнӗ май, колхозницӑсем ҫӗҫӗсем хӑйраса хатӗрлеҫҫӗ, махоркӑна ҫакса типӗтме курӑсран кантрасем яваҫҫӗ, сарайсене типтерлесе хатӗрленӗ. Бригада кӑҫал сахалтан та гектартан 17-шер центнер махорка пуҫтарса илме шутлать.

Ҫакӑнпа пӗрлех кӑҫал бригада махоркӑн вӑрлӑхне те нумай туса илет. Вӑрлӑх участокӗсене уйӑрнӑ. Унти махоркӑна уйрӑмах лайӑх пӑхса ҫитӗнтереҫҫӗ.

**Г. МАТВЕЕВ.**

### Бригадӑри хӗрлӗ ялав

Чкаловски районри «Звезда» колхозӑн иккӗмӗш бригадинчи комсомолка Кадире Ильясова юлташ ертсе пыракан звено уборкӑна тухнӑранпах паха тӗслӗхсемпе ӗҫлет. Ӗҫ тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ӳстерсе ӗҫлесе, звено бригадӑн куҫса ҫӳрекен ялавне илме тивӗҫлӗ пулнӑ.

Звенора пурӗ 10 колхозница. Вӗсен план тӑрӑх кулленех 1 гектар тырӑ вырмалла. Звено кулленех 1,5—1,75 гектар вырать. Августӑн 3-мӗшӗнче звено ҫӗнӗ ҫӗнтерӳ турӗ. Ирхи кӳлӗмччен вӗсем пӗр гектар вырнӑ, каҫчен тата тепӗр гектар ытларах вырнӑ. Ҫапла звено вӑл кун хӑйӗн талӑкри ӗҫ планне 200 процент ытла тултарнӑ. М. Алеева, И. Асеинова, М. Мустафина, С. Минибаева, Р. Хайбулова, Т. Усманова тата ыттисем те уборкӑра двухсотниксен ретне тӑчӗҫ.

Звенон ӗҫ пахалӑхӗ лайӑх. Тӑкӑннӑ пучахсене ҫийӗнчех пуҫтарса пыраҫҫӗ.

**П. НИКОЛАЕВ.**

### Кӗр акине тухрӗҫ

ЕТӖРНЕ, августӑн 10-мӗш. (**Телефонпа**). Районри Киров ячӗпе тӑракан, «Ленинский завет», «Правда», Буденный ячӗпе тӑракан колхозсем кӗр акине тухрӗҫ. Буденный ячӗпе тӑракан колхоз кӑҫал кӗрхи тырӑсене 8 кун хушшинче пысӑк пахалӑхпа акса хӑварассишӗн тӑрӑшать. Августӑн 8-мӗшӗнче колхоз пуҫласа 11 гектар ыраш акрӗ. Малтанхи кунах сеялкӑпа тата алӑпа та акрӗҫ.

**Н. ЛЮБИМОВ.**

## Пӗр-пӗринпе ӑмӑртакан районсенче

### *Комсомольское—Первомайское*

**Комсомольски** район августӑн 9-мӗш тӗлне пурӗ 6.012 гектар ыраш вырнӑ. Ҫакӑ вӑл кӗрхи тырӑсен пӗтӗм лаптӑкӗн 66,5 проценчӗ пулать. Вӑл шутран тырра комбайнсемпе 249 гектар, жнейкӑсемпе, лобогрейкӑсемпе 2.735 гектар, кӗреплеллӗ ҫавасемпе 172 гектар вырнӑ. Малта пыракан «Ударник», «Красный Октябрь», «Трактор» тата «Красный маяк» колхозсем ыраш вырса пӗтернӗ. Ыран-паянах тата 5 колхоз ыраш вырас ӗҫе вӗҫлеҫҫӗ. Августӑн 11—12-мӗшӗсенчен кая юлмасӑр районри пур колхозсенче те ыраш вырас ӗҫ вӗҫленет, ҫурхи тырӑсене вырас ӗҫ пуҫланать.

«Красный клевер» колхозра машиновед Д. Демин юлташ жнейкӑпа кулленех 6-шар гектар тырӑ вырса ӗҫ нормине 150 процент тултарать. Ӗҫӗн пахалӑхӗ лайӑх.

Комбайнер Истьяков юлташ куллен 14 гектар вырать. Виҫӗ кун хушшинче вӑл 42 гектар ыраш вырса пухнӑ. Ҫавӑн пекех Хасьянов, Мухина тата ытти хӑшпӗр комбайнерсем те начар мар ӗҫлеҫҫӗ. Пӗтӗмпе илсен, уборкӑра комбайнсемпе туллин усӑ курма тытӑннӑ. Вӑл шутран комбайнсемпе 39 гектар сурӑ, жнейкӑсемпе тата лобогрейкӑсемпе 404 гектар вырнӑ. Районра пӗр «Красное Именево» колхоз ҫеҫ ыраш вырса пӗтернӗ. Кӗрхи тырӑсене пухса кӗртес ӗҫе «Восход», «Ҫӗнтерӳ», «Совет» колхозсем ҫак кунсенчех вӗҫлеҫҫӗ. Районри 7 колхоз августӑн 8-мӗшне ҫитсе те ыраш вырма тытӑнман.

**Б. МУСТАФИН.**

**Райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ.**

* * *

**Первомайски** район августӑн 9-мӗш тӗлне 2.937 гектар ыраш вырнӑ, урӑхла каласан, кӗрхи тырӑсене вырас плана район 53 процент пурнӑҫланӑ.

Колхозниксемпе колхозницӑсен ӗҫлес хастарлӑхӗ пысӑк. «Красный флот» колхозӑн пӗррӗмӗш бригади ыраша 7 ӗҫкунӗ хушшинче вырса пӗтерчӗ. Уборка вӑхӑтӗнче колхозра 17 стахановец палӑрнӑ. Вӗсем кулленех ӗҫ нормине 150 процентран кая мар пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. М. Николаева колхозница талӑкри ӗҫ нормине 157 процент тултарса пырать. 4-мӗш бригадӑра А. Халапова колхозница ыраша кунне 0,20 гектар вырать. Машиновед П. Шамкин юлташ жнейкӑпа кашни кунах 8-шар гектар вырса пырать. «Осоавиахим» колхоз членӗсем те пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. П. Раськина, М. Еривансва, А. Алексеева колхозницӑсем уборкӑна тухнӑранпах тырра алӑпа куллен 0,24 гектар вырса пыраҫҫӗ.

Районра тырра комбайнсемпе тата ытти машинӑсемпе вырассине тивӗҫлипе организацилемен. МТС-ӑн 6 комбайн пулсан, вӗсенчен 2—3-шӗ кӑна ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсемпе те 3—4 кун хушшинче 39 гектар ҫеҫ вырса пухнӑ.

**Н. УТКИН.**

**Райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ.**

### *Чкаловское—Шӑмӑршӑ*

**Чкаловски** район августӑн 9-мӗш тӗлне 6.763 гектар вырса кӗрхи тырӑсене пухса кӗртес плана 70 процент ытла тултарнӑ. Жнейкӑсемпе тата лобогрейкӑсемпе 3.365 гектар, комбайнсемпе 122 гектар вырнӑ.

Районри 6 колхоз («Кзыл Тан» «Красный Октябрь, «Ырлӑх» Нариман ячӗпе тӑракан, «Комбайн», «Кзыл Сабанча» колхозсем ыраш вырса пӗтернӗ. Паян «Канаш», «Осоавиахим», «Красное знамя», Киров, Ворошилов ячӗсемпе тӑракан колхозсем ыраш вырас ӗҫе вӗҫлеҫҫӗ.

Колхозсем тырӑ вырмалли машинӑсемпе туллин усӑ курма тӑрӑшаҫҫӗ. Сталин ячӗпе тӑракан колхоз ыраша жнейкӑсемпе 170 гектар, Киров ячӗпе тӑракан колхоз 150 гектар, «Красное знамя» колхоз 120 гектар, «Звезда» колхоз 116 гектар вырнӑ.

Ленин ячӗпе тӑракан колхозра кӗрхи тырӑсене кӗреплеллӗ ҫавасемпе анлӑн выраҫҫӗ. Кӗреплеллӗ ҫавасемпе ӗҫлекен кашни колхозниках кунне 0,33 гектар тырӑ вырмалла пулсан, нумайӑшӗ 0,40 гектар выраҫҫӗ. Алӑпа выракансем те паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ. Н. Казакова, А. Дружинина колхозницӑсем кунне 0,16-шар гектар выраҫҫӗ, кулленех виҫшер ӗҫкунӗ ытла ӗҫлесе тӑваҫҫӗ.

«Кзыл Тан» колхозра колхозница-орденоноска М. Шарафутдинова юлташӑн звени ӗҫ нормине тӑтӑшах 200—215 процент тултарса пырать. Ҫак колхозрах колхозница Эльмибаян Гайнуллина юлташ алӑпа куллен 0,20 гектар тырӑ вырать.

**В. НИКИТИНА,**

**Райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ.**

**Шӑмӑршӑ** районӗ августӑн 9-мӗш тӗлне 4.200 гектар ыраш вырнӑ. Ҫакӑ вӑл кӗрхи тырӑсен пӗтӗм лаптӑкӗн 67 проценчӗ пулать. Вӑл шутран комбайнсемпе 107 гектар, жнейкӑсемпе 2.395 гектар, кӗреплеллӗ ҫавасемпе 398 гектар вырнӑ.

Районри 11 колхоз («Победа», «Заря», «Канаш», «Сталь», «Динамо» тата ыттисем те) кӗрхи тырӑсене вырса пӗтернӗ. «Победа» колхоз кӗрхи тырӑсене плапа пӑхнинчен 3 кун маларах вырса пухрӗ. Колхозӑн машиновечӗсем Н. Сидоровпа П. Камсов юлташсем жнейкӑсемпе куллен 14—15 шер гектар тырӑ вырса, ӗҫ нормине виҫӗ хут ытла тултарса ӗҫлеҫҫӗ.

«Правда» колхозра Эпти Изамбаев, «Динамо» колхозра В. Барышников машиновечӗсем жнейкӑсемпе сменӑра 4-шар гектар вырмалла пулсан, кулленех 8—9 гектар выраҫҫӗ. «Правда» колхозра 60 ҫултан иртнӗ ватӑ колхозниксем Х. Кузьмин, В. Кашкаров юлташсем ыраша кӗреплеллӗ ҫавасемпе ҫулаҫҫӗ. Х. Кузьмин юлташ кулленех 0,70 гектар, В. Кашкаров юлташ 0,65 гектар ҫулаҫҫӗ. Вӗсенчен пример илсе колхозницӑсем те тырра кӗреплеллӗ ҫавасемпе вырма тытӑннӑ. О. Юманова, А. Иванова колхозницӑсем кӗреплеллӗ ҫавасемпе талӑкра 0,63-шер гектар выраҫҫӗ.

Коммунист М. Чекменев юлташ ертсе пыракан бригада («Победа» колхоз) кӗрхи тырӑсене планпа пӑхнинчен икӗ кун маларах—икӗ талӑк хушшинче вырса пуҫтарнӑ. Нумайӗш колхозницӑсем кулленех 0.18—0,20-шер гектар вырнӑ.

**А. ДЕРГАЧЕВ.**

**Райҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ.**

## *Колхоз председателӗсен тимсӗрлӗхне пула комбайнсем туллин ӗҫлемеҫҫӗ*

ИЕПРЕҪ. (**Телефонпа**). МТС бригадисем ыраша комбайнсемпе вырма августӑн 5-мӗшӗнче тухрӗҫ. Виҫӗ кун хушшинче вӗсем пурӗ 250 гектар ытла тырӑ вырса пухнӑ. Ку вӑл тырӑ вырас плана МТС бригадисем 50 процента ҫити пурнӑҫлани пулать.

Уборка вӑхӑтӗнче социализмлӑ ӑмӑрту бригадӑсенче татах та вӑйлӑн сарӑлни палӑрать. 7-мӗш бригадӑри комбайнер Петр Михайлов ӗҫ нормине кулленех ирттерсе тултарать. Вӑл хӑйӗн комбайнӗпе паянччен 47 гектар вырса пухнӑ, хӑйӗн уборка вӑхӑтӗнчи нормине 90 процент тултарнӑ.

Комбайнер А. Сергеев кулленех 12—13-шер гектар тырӑ вырать. Ҫавӑн пекех 8-мӗш бригадӑри комбайнер Н. Соловьева юлташ та ӗҫ тухӑҫне кунран кун ӳстерсе пырать. Малтанхи кунсенче вӑл талӑкра 10—12-шер гектар ҫинчи тырра пуҫтарса пынӑ.

Анчах та комбайнсене ӗҫлеме кирлӗ майсене пур колхозсенче те туса паман-ха. Тӗслӗхрен, Н. Соловьев юлташ ӗҫлекен «Красный металлист» колхозра комбайн патӗнче ӗҫлеме ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ чухлӗ паман. Комбайн ҫапса кӑларакан тырра турттарма кунта ҫынсем те, лашасем те ҫителӗклӗ мар. Ҫавӑнпа комбайнерӑн е чарӑнса тӑма лекет, е бункертан тырра ҫӗр ҫине пӑрахса хӑвармалла килсе тухать. Колхоз председателӗ Новиков юлташ комбайн патӗнче ӗҫлеме мӗнпурӗ те 4 лаша ҫеҫ уйӑрса панӑ. Ҫавӑнпа бункертан ҫӗр ҫине пушатнӑ тырӑ августӑн 6-мӗшӗнче ҫӗрӗпех уйра выртнӑ. Ӑна никам та хураллаьман. Ҫавӑн пекех Молотов ячӗпе тӑракан колхозра та комбайнсем ӗҫленӗ ҫӗрте шыв ҫителӗксӗр, тырра турттарма, улӑм купаласа пыма ӗҫ вӑйне ҫителӗклӗ таран уйӑрса паман.

Ҫак ҫитменлӗхсем вӗсем тырра комбайнсемпе хӑвӑрт вырса илессине тивӗҫлипе хакламаннинчен, тырӑсене тӑккаламасӑр пухса кӗртессишӗн тӑрӑшманнинчен килсе тухаҫҫӗ.

**Д. МИХАЙЛОВ.**

*ОТЕЧЕСТВЕННӐЙ АСЛӐ ВӐРҪӐ ФРОНЧӖСЕНЧЕ*

## Воронеж районӗнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августӑн 9-мӗш. (**ТАСС спецкорӗ**). Воронежран кӑнтӑр енчерехре Донӑн хӗвеланӑҫ ҫыранӗнче пуҫланса кайнӑ ҫапӑҫусем малалла пыраҫҫӗ. Пирӗн чаҫсем, шыв урлӑ каҫса тата хӗвеланӑҫ ҫыранри халӑх пурӑнакан икӗ пункта йышӑнсе илсе, тӑшманӑн пехотипе танкӗсем тӑвакан атакӑсене пӗрин хыҫҫӑн теприне ӑнӑҫлӑн сире-сире пӑрахаҫҫӗ, йышӑннӑ рубежсене ҫирӗппӗн тытса тӑраҫҫӗ. Пирӗн чаҫсем Дон урлӑ ӗнер тепӗр вырӑнта каҫнӑ та, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе пырса, ҫавтери вӑйлӑн ҫапӑҫса малалла куҫаҫҫӗ.

Воронежран кӑнтӑр енче ҫирӗплӗхпе паттӑрлӑхӑн тӗслӗхӗсене Н-ски чаҫӑн красноармеецӗсем кӑтартаҫҫӗ. Ӗнер, нимӗҫсен контратакисенчен пӗрне сирсе пырса, вӗсем нимӗҫсен темиҫе танкне стройран кӑларнӑ тата нумай гитлеровецсене вӗлерсе пӗтернӗ.

Пирӗн чаҫсем куҫса пынине чарса лартас тесе, фашистсем темиҫе хутчен те контратака тунӑ. Виҫӗ танк, темиҫе миномет тата пехотӑн пӗр батальонне ҫукатса тӑшман каялла чакнӑ. Каҫ пулса тӗттӗмленсен, пирӗн боецсем, нимӗҫсем вӑйлӑн персе тӑнине ҫӗнтерсе, халӑх пурӑнакан пӗр пункта йышӑнса илнӗ тата ҫӗнӗ рубежшӑн ҫӗрӗпех ҫапӑҫнӑ. Паян ирхине совет войскисен подразделенийӗсем халӑх пурӑнакан иккӗмӗш пунктӑн хӗррине ҫӗмӗрсе кӗнӗ. Урамри ҫапӑҫу пӗрсе кайнӑ, вӑл пирӗн боецсем ҫӗнтернипе вӗҫленнӗ.

Пирӗн летчиксем хамӑрӑн ҫӗр ҫинчи войскӑсене пысӑк пулӑшу парса тӑраҫҫӗ. Пирӗн штурмовиксемпе бомбардировщиксем пӗр кун хушшинче нимӗҫсен 6 танкне пӗтерсе тӑкнӑ, 70 автомашинӑна стройран кӑларнӑ, бензоцистернӑсем ҫунтарса янӑ, грузсем турттарса пыракан 61 лава ҫапса аркатнӑ, тӑшманӑн пехотине икӗ ротӑна яхӑн, венгерсен кавалерин икӗ взводне ҫаппаласа янӑ тата вӗлерсе пӗтернӗ. Ҫав кун совет летчикӗсем фашистсен пӗр самолетне аэродром ҫинче ҫунтарса янӑ, пӗр самолетне сывлӑшри ҫапӑҫусенче персе ӳкернӗ.

**Г. КРЫЛОВ.**

*Пирӗн землянсем*

## Рота писарӗ

Рота писарӗ Яков Петров Хӗрлӗ Ҫара Чӑваш республикинчен килнӗ. Вӑл хӑйӗн ӗҫне тӗплӗн туса пынӑ, анчах ӑна кӑшт кичемрех пулнӑ. Упӑн ротӑри юлташӗсем снайперсем пулса тӑнӑ, хӗҫпӑшала тыткалама лайӑх вӗренсе ҫитнӗ. Петров вара пӗрмаях хӑйӗн карандашӗпе тата хут таткисемпе аппаланса ларнӑ.

— Ҫаксем ӗнтӗ манӑн боеприпассем,—тесе шӳт тунӑ вӑл хӑйне-хӑй.

Анчах пӗррехинче рота писарӗ хӑйӗн аллине чӑн-чӑн боеприпассемех илнӗ, вӗсене пӗлсе, хӑюллӑн тыткаланӑ.

Тӑшман пулемечӗ пирӗн ротӑн ҫулне пӳлсе тӑнӑ. Ҫав пулемета пӗтерсе тӑкас ӗҫе Петров хӑй ҫине илнӗ. Боецсемпе пӗрле рота писарӗ малалла шуса кайнӑ. Вӑл пултаруллӑн пластунла шуса пынӑ, тӗме патӗнчен тӗме патне, ҫити чупа-чупа иртнӗ. Нимӗҫсем вӗсене стройран кӑларма тем пекех тӑрӑшнӑ пулин те, ҫавна тума пултарайман. Боецсен пӗчӗк ушкӑнӗ тӑшманӑн пулемечӗ патне ҫывхарса пынине ротӑри красноармеецсем тимлӗн, сывлӑш кӑлармасӑр пӑхса тӑнӑ. Петров ушкӑнӗ часах тӑшман пулемечӗ патне 20 метра ҫити ҫывхарса ҫитнӗ. Рота писарӗ чи малтан тӗм хыҫӗнчен ҫӗкленсе фашистсен пулемечӗн расчечӗ ҫине гранатӑсем ывӑтнӑ. Пӗтӗм расчет вилсе пӗтнӗ. Петров тӑшманӑн станковӑй пулеметне ярса тытнӑ та ӑна подразделение илсе ҫитернӗ.

Тепӗр ҫапӑҫура рота писарӗ санитар пулса кӗрешнӗ. Советӑн темиҫе боецне амантнӑ пулнӑ. Хӑйсем чакса пынӑ чухне гитлеровецсем хӳтӗленес шутпа вӑйлӑн персе тӑнӑ. Ҫапӑҫу хирӗн кашни татӑкӗ ҫине пульӑсем пыра-пыра ӳкнӗ. Ҫапах та Петров малалла шуса кайнӑ. Вӑл вут-хӗм айӗнчен суранланнӑ 8 красноармееца тата икӗ командира илсе тухнӑ.

Ҫав вӑхӑтран пуҫласа Петров, хӑй рота писарӗ пулса ӗҫленипе пӗрлех, кашни ҫапӑҫурах пулнӑ.

Хӑйӗн паттӑр ӗҫӗсемшӗн Петров пысӑк награда—Ленин орденӗ илнӗ. Нумаях та пулмасть хӗрӳллӗ ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче икӗ гитлеровеца персе пӑрахса тата пӗрне чиксе вӗлерсе Петров боецсене хӑйпе пӗрле илсе кайнӑ. Хӑюллӑн пырса ҫапса фашистсене хӑваласа янӑ. Ҫӗр ҫинче вӗсен вуншар салтакӗсемпе офицерӗсем вилсе юлнӑ. Ҫав ҫапӑҫура Петров йывӑр аманнӑ. Вӑл сурана тӳрлетсе фронта таврӑнаймарӗ. Ҫаҫе кӗҫех хӑюллӑ боец вилни ҫинчен пӗлтерчӗҫ. Вӑл хӑйне ӗмӗрлӗх мухтавпа витрӗ. Совет халӑхӗн паттӑр ывӑлӗ пулса, Петров тӑван ҫӗршыв телейӗшӗн хӑйӗн пурнӑҫне пачӗ. Вӑл ӗмӗрех пирӗн асра пулӗ.

**П. БАРАННИКОВ.**

# Совет Информаци Бюровĕнчен

## Августăн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç Клетская районĕнче, Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра, çавăн пекех тата Армавирпа Кропоткин районĕсенче хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăллă улшăнусемех пулман.

Иртнĕ эрнере, августăн 2-мĕшпе 8-мĕш хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, противникăн аэродромĕсем çинче тата зенитнăй артиллерирен персе нимĕçсен 400 çитти самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 205 самолет пĕтнĕ.

* * *

Августăн 8-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 30 çитти танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 60 ытла лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне тата горючин 2 складне сирпĕнтерсе янă, хуралра çӳрекен карапа путарнă, противникăн пехотине 3 батальона çитти сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районĕнче гитлеровецсем пирĕн чаçсене хирĕç атакăсем тунă. Противник пирĕн оборонăн малти хĕррине савăлланса кĕме пултарнă. Пирĕн боецсем контратакăна куçнă та флангсенчен пырса çапса нимĕçсен 6 танкне тата 450 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Клетскаяран кăнтăрарах районра вăйлă çапăçусем пынă. Пирĕн боецсем хамăрăн тăван çĕрĕн кашни метрне хӳтĕлесе хăварассишĕн хăйсен пурнăçне шеллемесĕр паттăррăн çапăçаççĕ. Пулеметнăй ротăн командирĕ лейтенант Тропин нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 2 взводне пĕтерсе тăкнă. Старшина Потапов ертсе пыракан автоматчиксен групи гитлеровецсен пĕр батальонĕн наступленине чарса тăнă. Боецсем пĕр утăм та каялла чакман, тĕл персе нимĕçсен атакине сирсе пăрахнă. Красноармеец Мифтахов Заким, наводчикăн, авăрлаканăн тата замковăйăн ĕçĕсене хăй пĕчченех туса пырса, тӳррĕн тĕллесе перипе гитлеровецсене çĕр çынран кая мар вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăç енчи районра пирĕн войскăсем противникăн пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕнĕ танкĕсемпе автоматчикĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Совет танкисчĕсем гитлеровецсене темиçе хутчен хирĕç пырапыра çапнă. Нимĕçсен 12 танкне тата 200 çитти автоматчикне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Армавир районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç оборонăллă йывăр çапăçусем туса пынă. Гитлеровецсен атакисене сире-сире пырса, пирĕн Н-ски соединенин чаçĕсем нимĕçсен 7 танкне тата 300 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем противникăн шăтарса кĕнĕ танкĕсемпе мотопехотине хирĕç хаяррăн çапăçнă. Кропоткин районĕнче гитлеровецсем çапăçăва хăйсен резерври танкĕсемпе пехотине кĕртсе янă та пирĕн чаçсене хĕснĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче 2 енĕ те артиллерирен персе тăнă тата разведка тăвакан группăсен шыравĕсем пулса пынă. Пирĕн разведчиксем активлăн çапăçса 200 çитти гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн 3 противотанковăй орудине, темиçе пулеметне, боеприпассем тиенĕ темиçе автомашинине пĕтерсе тăкнă. Участоксенчен пĕринчи çапăçура «Голландин добровольцла легионĕ» текенскерĕн 50 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белофин войскисен тылĕнче кĕрешекен партизансен «Красный онежец» ятлă отрячĕ юлашки вăхăтра тăшманăн 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуçне партизансем нимĕçсен 2 çар складне çунтарса янă, темиçе автомашинине, 2 тракторне пĕтерсе тăкнă тата нумай тĕлте телефонпа телеграф çыхăнăвне пăсса хунă.

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Минск хулинче çавтери тискер ĕçсем тунă. Майăн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле гитлеровецсем хулан урамĕсенче вырăнти çынсене массăллăн асаплантарса вĕлерес ĕçе организациленĕ. Советски тата Ленински урамĕсенче, Свобода площадĕнче тата вокзал патĕнче хулари 50 çынна çакса вĕлернĕ. Нимĕçсем Минскри лагере тытса хупнă тыткăнри çар çыннисемпе совет гражданĕсене, пуринчен ытларах хĕрарăмсене, массăллăн асаплантарса вĕлернĕ. Фашистла бандитсем çав лагерьте совет гражданĕсене темиçе пин çынна персе вĕлернĕ.

## Августăн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç Клетская районĕнче, Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăç енчи районра, çавăн пекех тата Армавирпа Кропоткин районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусемех те пулман.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн чаçсем противникăн темиçе атакине сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсем 250 ытла виле пăрахса хăварнă. Пĕр чаçри бронебойщиксем нимĕçсен 6 танкне пĕтерсе тăкнă. Клетскаяран кăнтăрарах вырăнта противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç хаяр çапăçусем пулса пынă. Пĕр талăк хушшинче нимĕçсен 15 танкне тата салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăç еннерехри районра вăйлă çапăçусем пулса пынă. Участоксенчен пĕринче пирĕн чаçсем нимĕçсен пехотин икĕ батальонне çапса аркатнă тата 20 танк пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем противника атакăланă та çапăçура 11 оруди, темиçе пулеметпа миномет тытса илнĕ. Кавалерин Н-ски чаçĕ тăшманăн тылне кĕрсе кайса рейд тунă. Кавалеристсем 3 склад пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен полкĕн штабне çапса аркатнă тата 350 ытла гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Армавир районĕнче противник малалла çĕмĕрсе кĕме хăтланать. Юнлă çапăçу хыççăн,—çав çапăçура нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă,—пирĕн чаçсем оборона тумалли çĕнĕ рубеж патне куçнă. Кӳршĕри участокра противникăн шăтарса кĕнĕ группировкине хирĕç хаяр çапăçусем пулса пынă. Кропоткин районĕнче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç кĕрӳллĕн çапăçнă. Алексей Шельгас лейтенантăн танковăй экипажĕ пĕр кун хушшинче нимĕçсен 8 танкне, 4 противотанковăй орудине тата противникăн 300 çитти салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж фронтĕнчи пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, çавăнта нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Дон шывĕн хĕвеланăç çыранне каçнă пирĕн чаçсем противникăн темиçе атакине сирсе пăрахнă тата нимĕçсен 10 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Партизансен Ворошилов ячĕпе тăракан отрячĕ, Орел облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, темиçе кун хушшинче оккупантсен пысăк отрядне хирĕç çапăçнă. Оккупантсене таксем пулăшса пынă пулнă. Çав çапăçура партизансем 200 гитлеровеца çитти вĕлерсе пĕтернĕ тата нимĕçсен 2 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 218-мĕш пехотнăй дивизийĕн транспорт колоннинчен тыткăна лекнĕ салтак Эрнст Риман çапла каласа панă: «Пирĕн транспорт колонни фронта артиллери валли боеприпассем турттарса пыратчĕ. Çула май пирĕн пата ытти чаçсенчи салтаксемпе лавсем хутшăнчĕç. Вăрманта малта пыракан лавсем минăсем çине пырса тăрăнчĕç те сирпĕнсе кайрĕç. Çав вăхăтрах партизансем вăрмантан пулеметсенчен вăйлăн пеме тытăнчĕç. Пирĕн çине ручной гранатăсем вăркăнма пуçларĕç. Мĕнпур обоза пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкрĕç. 100 çынна яхăн вилсе пĕтрĕç. Чĕррĕн эпĕ тата тепĕр салтак кăна тăрса юлтăмăр та тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Белоруссии ССР-чи Кричевски районри Лютино ялĕнчи халăха вĕлерсе пĕтернĕ. Нумаях пулмасть гитлеровецсем ялти мĕнпур халăха шкул çуртне хăваласа пуxнă пулнă. Нимĕç офицерĕ партизансем ăçта вырнаçса тăнине кăтартса пама ыйтнă, анчах вăл нимĕн те пĕлеймен. Вăл хушнă тăрăх салтаксем арестленисене тискеррĕн хĕнесе пĕтернĕ, анчах çынсем çаплах нимĕн те шарламан. Палачсем тĕлейсĕрсене нумайччен асаплантарнă, мăшкăлланă вĕсенчен, кайран шкул çуртне, унта хупса хунă çынсемпе пĕрлех, çунтарса янă. Пĕтĕмпе 74 çын çунса кайнă.

* * *

Парижра хĕрарăмсен демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Демонстрантсем: «Тĕп пултăр Гитлер! Тĕп пултăр сутăнчăк Лаваль! Пирĕн тăвансемпе упăшкасене тыткăнран таврăр!» текен плакатсемпе лозунгсем çĕклесе пынă.

* * *

Югослави партизанĕсем çак кунсенче оккупантсенчен татах тепĕр хулана тытса илнĕ. Çав хулашăн пынă çапăçура партизансем оккупантсемпе вĕсене пулăшакансене темиçе çĕр çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: пĕр броневик, 12 пулемет, 2 миномет, взрывчаткăсем нумай тата 70.000 патрон. Хула тĕрминчен Югослави 50 патриотне ирĕке кăларнă. Вĕсене персе пăрахмалла приговор йышăннă пулнă. Хулари халăх партизансене хавасăн кĕтсе илнĕ тата халĕ оккупантсене хăваланă çĕрте те партизансене пулăшса пырать.

## Хĕрлĕ лавсем

СЕМЕРЛЕ, августăн 10-мĕш. (Хамăр корр.). Паян «Красноармеец» колхоз 16 лавлă хĕрлĕ обозпа районри хатĕрлев пунктне 48 центнер çĕнĕ тырă леçсе пачĕ. Колхозра авăн çапас ĕç вăйлăн пуçланнă. Паянхи куна 47 гектар çинчи тырра çапнă.

*Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту*

# ВЦСПС-па наркоматсенче

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе Халăх Комиссариачĕсем промышленность работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Пĕр Халăх Комиссариачĕ тăрăх ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухнă предприятисен шутĕнче пирĕн республикăри Я. Бенский юлташ директор, В. Поддубко юлташ партбюро секретарĕ, А. Блошенко юлташ завком председателĕ пулса ĕçлекен завод пур.

ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕ çак завод коллективĕ производствăна лайăх йĕркеленине, продукцисене массăллăн тата пĕр пек кăларма пуçланине, июль уйăхĕнчи обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçланине тата государство планне номенклатура тăрăх ирттерсе тултарнине паллă тăваççĕ.

Çавăнпа ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Бенский юлташ ертсе пыракан завод аллинчех хăварма тата унăн коллективне преми пама йышăннă.

Кунсăр пуçне çак завод тепĕр Халăх Комиссариачĕ тăрăх май уйăхĕнче мала тухнишĕн ВЦСПС-па çав Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕччĕ. Июнь уйăхĕнчи ĕçсем тăрăх ялав завод аллинчех юлчĕ. Çак наркомат енĕпе июль уйăхĕнче 330-мĕш номерлĕ предприяти мала тухнă. Çавăнпа ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕ, хăйсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Бенский юлташ ертсе пыракан заводран илсе, 330-мĕш номерлĕ предприятие пама йышăннă. Унпа пĕрлех ВЦСПС-па çав Халăх Комиссариачĕ Бенский юлташ ертсе пыракан завод вĕсен енĕпе те лайăх ĕçленине палăртнă.

* * *

Директор Бенский, партбюро секретарĕ Поддубко, завком председателĕ Блошенко юлташсем ертсе пыракан завод коллективĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртун виççĕмĕш уйăхне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Коллектив июль уйăхĕнче июнь уйăхĕнчинчен лайăхрах ĕçлерĕ. Изделисене планран ирттерсе 1,5 хут ытларах туса кăларса çĕршыва пачĕ. Чылай цехсемпе участоксем, талăкри графика производствăн тĕп законĕ вырăнне хурса ĕçленĕ май, ĕç хăвăртлăхне ӳстерчĕç. Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне алăран вĕçертмелле мар — çавăн пек задачăпа ĕçлерĕç июльре заводри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем. Вĕсем çав задачăна чыслăн пурнăçларĕç: ялава хăйсен аллинчех хăварчĕç, ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕн çĕнĕ премине илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Иртнĕ уйăхра Троицкий тата Кинзбургский юлташсем ертсе пыракан цехсем уйрăмах тухăçлă ĕçлерĕç. Троицкий юлташăн цехĕ уйăхри плана 1,5 хут ирттерсе тултарчĕ. Июнь уйăхĕнче мала тухнишĕн ку цех коллективĕ заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ. Кинзбургский юлташăн цехĕ те уйăхри плана 22 кун хушшинчех тултарнă. Цех коллективĕ талăкри графикпа тăрăх тикĕс те пĕр пек ĕçлесе пырать.

Подсобнăй ĕçсене тăвакан цехсем те (начальникĕсем Скиндер, Семенов тата Трабский юлташсем) июльри плана ăнăçлăн тултарнă.

Çак кунсенче заводри жюри канашлу тăвать. Вăл заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсене хăш цехсене парассине пăхса тухать.

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне августри ĕçсем тăрăх та тытса хăвармалла — çавăн пек тĕллевпе ĕçлет халĕ завод коллективĕ.

## Ăмăртăва хакламан çĕрте

ПАРАЧКАВ, августăн 8-мĕш. (Телефонпа). Районри предприятисемпе артельсенчен июль уйăхĕнчи плана механически арман çеç ăнăçлăн тултарнă. Промкомбинат (управляющийĕ Пеньков юлташ) Киров, Чкалов, Чапаев ячĕсемпе тăракан артельсем начар ĕçлеççĕ. Асăннă артельсенче рабочисен социализмлă ăмăртăвне организацилемен, ĕçе кашни кун шута илсе пымаççĕ, кадрсем хатĕрлесси çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхмаççĕ. Политикăллă-массăллă ĕçе те хальхи вăхăта тивĕçлĕ пек туса пыраççĕ теме çук.

Инвалидсен «Çĕнĕ çул» артелĕ (правлени председателĕ Базанова юлташ) июль уйăхĕнчи плана 49 процент çеç тултарнă. Кунта нормăран тухăçлăрах ĕçлекен рабочисем те сахал мар. Анчах социализмлă ăмăртăва организацилемен пирки, рабочисене ĕçре хавхалантарса пыман пирки нормăна тултарманнисем те пур.

Артельсен руководителĕсен асăннă çитменлĕхсене пĕтермелле, рабочисем хушшинчи ăмăртăва организацилемелле, ĕçе кашни кун шута илсе пымалла, плана пĕтĕмĕшпе кăна мар, кашни рабочин тултарассишĕн кĕрешмелле.

# Ют çĕршывсенче

## „Гитлера пырса çапма вăхăт çитрĕ“

### Америка пичечĕ иккĕмĕш фронт çинчен

НЬЮ-ЙОРК, августăн 8-мĕш. (ТАСС). Америкăри чылай хаçатсем иккĕмĕш фронт уçассине васкатма кирли çинчен кăтартса паракан статьясене малалла пичетлесе пыраççĕ.

«Нью-Йорк пост» хаçат Грефтон публицистăн статьине пичетлесе кăларнă. Вăл хăйĕн статьинче сывлăшран анлă наступлени туса пыни иккĕмĕш фронт уçассине каярах хăварма май парать текен шухăш тĕрĕс марри çинчен кăтартса парать. Çав тезис,—тесе çырать автор,—хăрушлăх кӳрекен тезис пулса тăрать, мĕншĕн тесен вăл ăнăçлă ĕçсене кая хăварса пыма хĕтĕртет. Сывлăшран чи анлă наступленилĕ операцисем туса пыни те,—тесе çырать Грефтон,—Гитлера хăйĕн войскисене Хĕвелтухăç фронтĕнчен чĕнсе илтерейĕмен пулĕччĕ.

«Пĕрлешнĕ çĕршывсен хăватлă вăйĕсене тĕплĕн шухăшласа тунă план тăрăх пĕр-пĕринпе килĕштерсе кĕрешĕве хутшăнтарсан кăна çĕнтерӳ тума пулать»,—тесе çырать «Нью-Йорк таймс» хаçат. «Стар» хаçатăн (Канзас Сити) шухăшĕпе, Европăра иккĕмĕш фронт уçассине Англипе Америка кая хăварса пырсан, вĕсем çавтери пысăк хăрушлăх умне тухса тăраççĕ.

«Пост» хаçат (Денвер) çапла çырать: «Иккĕмĕш фронт уçма кирли пирки нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасть. Вырăссене мĕнле те пулин хăвăртрах тата чи ăнăçлăрах майсемпе пулăшни питех те кирлĕ. Çакна ăна гитлеровецсем Россия çине хĕсние вăйсăрлатма кăна мар, çавăн пекех тата, Российăна пулăшса, вăрçăра çĕнтерес шутпа хамăра пулăшма та пурнăçа кĕртмелле».

«Морнинг ньюс» хаçат çапла çирĕплетсе çырать: Гитлер Совет Союзне хирĕç кĕрешме хăйĕн вăйĕсене çирĕплетес тесе хăйĕн Хĕвеланăç Европăри войскисене вăйсăрлатрĕ. Хаçат шухăшĕпе, Европа континенчĕ çине тапăнса кĕнине кĕтсе илме хăйсем хатĕр тăни çинчен гитлеровецсем каппайса пĕлтерсе, тĕрĕссипе, хăйсем хĕвеланăçĕнче вăйсăрланнине витме тăрăшаççĕ, çакă ĕнтĕ хĕвеланăçĕнчен тапăнса кĕрессине халех пуçламаллине ĕнентермеллех çирĕплетсе парать. «Гитлера пырса çапма вăхăт çитрĕ»,—тесе çырать юлашкинчен хаçат.

## Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, августăн 7-мĕш. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Италин иккĕмĕш армийĕн чаçĕсемпе Югослави партизанĕсем хушшинче Далмацин çыран хĕрринчи районĕсенче вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Çав операцисене Италин 30.000 яхăн салтакĕ хутшăннă. Оккупантсене артиллерипе тинĕс-çар флочĕ вăйлăн пулăшса тăнă, вĕсем партизансен кăнтăр Далмацин çыранĕ тăрăхĕнчи çирĕплетнĕ позицийĕсем çине персе тăнă.

Биоково тата Динер тăвĕсен районĕнче итальянецсем партизансене çавăрса илме хăтланнă, анчах вăйлă çапăçусем хыççăн вĕсен ирĕксĕрех каялла чакма лекнĕ. Çавăн чухне итальянецсен 500 çын вилнĕ тата 40 çын тыткăна лекнĕ.

Çавăн пекех Çурçĕр Далмацире тата Далмаци утравĕсем çинче те вăйлă çапăçусем пулса пыраççĕ, унта оккупантсем темиçе яла çунтарса янă тата 100 çынна ытла пере-пере пăрахнă. Хаяр çапăçусем хыççăн партизансен ударнăй отрячĕсем Томислав—Град хулине оккупантсенчен ирĕке кăларнă. Çар материалĕсем нумай тата боеприпассен темиçе складне тытса илнĕ.

## *Норвегире ирĕксĕр ĕçлеттерекен вырăнсенче стачкăсем пуçланнă*

СТОКГОЛЬМ, августăн 8-мĕш. (ТАСС). Çак кунсенче Çурçĕр Норвегире, çар ĕçне ĕçлеме ирĕксĕр мобилизациленĕ рабочисем хушшинче çынсене массăллăн арестлесе пĕтернĕ. Çакна ăна рабочисем ĕçе пăрахса тара-тара кайнă пирки тунă. Лафотен утравĕсем çинче нумай йышлă рабочисем забастовка пуçланă. Забастовщиксене полици арестлесе оккупантсен аллине панă.

Норвегири хуçасене çапла хушнă: ĕçе илес пулсан, Германи влаçĕсем «çав-çав çын ĕçрен ирĕклĕ тата унăн ĕç шырама право пур» тесе калакан удостоверени кăтартнă хыççăн кăна ĕçе илмелле.

## Фашизма хирĕçле движени Италире

НЬЮ-ЙОРК, августăн 9-мĕш. (ТАСС). Италире фашизма хирĕçле движени вăйлăн ӳссе пынине Италин фашистла пичечĕ пытарма пултараймасть. Çапла, сăмахран, Феррара провинцинче нумаях пулмасть листовкăсем салатнă. Çав листовкăсенче фашистла влаçсене Итали салтакĕсем вăрçă пĕтнĕ хыççăн фронтран таврăнсан çĕршыври хальхи режима тӳссе тăрас çукки çинчен асăрхаттарнă. Çавнашкал листовкăсене Италин ытти хулисенче те салатнă.

Итали пичечĕ йышăннă тăрăх, Италири фашизма хирĕçле организацисем Горици, Триест, Истрия тата Венеция—Юлия провинцийĕсенче уйрăмах пысăк активлăх кăтартаççĕ. Сăрт-ту районĕсенче çирĕпленсе ларнă хĕçпăшаллă ушкăнсем фашистла влаçсен представителĕсем çине тапăнаççĕ, карательнăй экспедицисене хирĕç çапăçаççĕ.

Нумаях пулмасть фашизма хирĕçле партизансем Пизиньяль хулинче налог пухса тăракан çынна тытса вĕлернĕ. Вăл вырăнти антифашистсене вăрттăн полици аллине тытса панă пулнă. Кассано хулинче партизансем карабинерсен отрядне вĕлерсе пĕтернĕ. Превалле хулин районĕнче партизансем Экономо баронăн кил-çуртĕ çине пырса тапăннă, унăн мĕнпур выльăх-чĕрлĕхĕпе продовольствине туртса илнĕ.

Нумаях пулмасть Горици çывăхĕнчи хаяр çапăçу хыççăн фашизма хирĕçле партизансенчен 9 çынна персе пăрахнă. Тепĕр икĕ кун иртсен çав районра кĕрешекен партизансем Черо-Суперьоро ялне пырса кĕнĕ те унта вырăнти фашистсен пуçлăхне вĕлернĕ.

Фашистла тискер террора пăхмасăрах, Муссолини режимне хирĕç пыракан кĕрешӳ анлăраххăн та анлăраххăн сарăлса пырать.

## Нимĕçсен аманнă салтакĕсене тиенĕ çĕнĕ эшелонсем Чехословакие çитни

ЛОНДОН, августăн 9-мĕш. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Прагăна санитарнăй поездсем, нимĕçсен аманнă салтакĕсемпе тулнăскерсем, кунсерен вуншарăн пырса тăраççĕ. Вагонсенчен аманнисем йывăррăн йынăшнисем илтĕнеççĕ. Германире медикаментсем питех те çителĕксĕр пирки, санитарнăй поездсенче пыракан аманнă салтаксен суранĕсене ытахалтен кăна çыха-çыха яраççĕ.

Шăматкунсемпе вырсарникунсенче Прагăра аманнă нимĕçсем патаксемпе туясем çине тĕренсе çӳренине питех те нумай курма пулать. Нимĕçсен Чехословакири гарнизонĕсенче салтаксен шухăш-кăмăлĕсем пусăрăнчăк. Салтаксем хĕвелтухăç фронтне ярасси çинчен шухăшлама та хăраççĕ. Вĕсем хушшинче таркăнсен йышĕ ӳсет.

## Ганди позицийĕ

ЛОНДОН, августăн 8-мĕш. (ТАСС). Ганди Индин национальнăй конгресĕн исполком бюровне нумаях пулмасть тăратнă резолюцин проектне вице-король çумĕнчи исполнительнăй совет пичетлесе кăларнă. Çав документа, резолюци тăрăх пулса иртнĕ прениссенче çырнă протоколсемпе пĕрле, темиçе кун хушшинче маларах полици Аллехабадра, конгресăн çуртĕнче ухтару тунă чухне, тытса илнĕ.

Резолюци проектĕнче çапла каланă: Конгресăн исполкомĕ Англия Индие кӳтĕлеме пултараймасть тесе тата индеецсемпе англичансен интересĕсем хушшинче конфликт пур тесе шутлать,—тенĕ.

Малалла Ганди тăратнă проектра: «Японин Индие хирĕç нимĕнле шут та çук. Вăл Британи империне хирĕç кăна çапăçать... Индия ирĕклĕх илес пулсан, унăн пĕрремĕш утăмĕ, тен, Японипе килĕштерессипе пулнă пулĕччĕ»,—тенĕ.

Малалла Ганди: «Англипĕн хăйĕшĕн те тата çавăн пекех Инди хăрушсăрлăхĕшĕн те, пĕтĕмĕшлĕ миршĕн те Англин Индире пуçпулса тăрассинчен пăрăнмалла», тесе чĕнет. Çакăн пек требованине лартса,—тенĕ резолюцире,—конгресăн исполкомĕ Япони правительствипе Япони халăхне конгресс исполкомĕн Япони тĕлĕшпе тăшманла туйăмсем çук, тесе шантарса каласшăн.

Резолюцире малалла çакна палăртнă: Индие çар тĕлĕшĕнчен ютçĕршывсен пулăшăвĕ кирлĕ мар, «Индия хăйĕн ирĕклĕхне вăйпа мар çĕнтерсе илĕ тата çапла майпах тытса тăрĕ. Японин Инди тĕлĕшпе нимĕнле претензи те çукки çине исполком шанса тăрать»,—тенĕ.— Япония Инди çине килсе тапăнас пулсан вара, «конгресс членĕсем Япони войскисене хирĕç тăмĕç, вĕсемпе пĕрле ĕçлеме те килĕшӳ памĕç». Урăхла каласан, японецсен приказĕсене пăхăнассинчен пăрăнĕç, вĕсенчен пулăшу ыйтмĕç тата хăйсем те вĕсене пулăшу памĕç».

Англи войскисем Инди территорийĕ çинче тăни пирки резолюцире çапла каланă: «Индире ютçĕршыв войскисем пулни çĕршывăн интересĕсене сиенлет тесе шутлать исполком. Çавăнпа та исполком Англи правительствинчен ютçĕршыв войскисене Индирен чĕнсе илме ыйтать»,—тенĕ.

Резолюцин çав проектне сӳтсе явнă чухне конгресс исполком бюровĕн ларăвĕнче ăна хирĕç Неру тухса каланă. «Эпир тĕнĕл держависемпе пĕрлешсе тăратпăр тесе шухăшлама питех кирлĕ мар»,—тенĕ Неру. Неру панă сĕнӳсем тăрăх, резолюцие чылай паллă улшăнусем кĕртнĕ. Çапла, сăмахран, Японипе калаçусем тума палăртакан пункта пачах сирсе хăварнă. Анчах конгресс исполкомĕн бюровĕ йышăннă резолюцире Англия Индире пуçпулса тăрассине кăларса пĕтерсе лартма ыйтнине çаплипех хăварнă тата çавăнпа килĕшмесен, Инди граждăнĕсем Англи влаçĕсене пăхăнас марришĕн кампани пуçласа ярассипе хăратнă.

Аллехабадри документсене пичетлесе кăларнă хыççăн Англири пичет Гандипе конгреса çивĕччĕн критикăлама тытăннă. «Ньюс кроникл» хаçат çапла çырать: «Тытса илнĕ документсем Гандин Англие хирĕçле позицийĕ мирлешме пултарайман позици пулса тăнине тата Инди ыйтăвне татса парас ĕçре юрăхсăр позици пулса тăнине çĕнĕрен çирĕплетсе параççĕ. Хăй вăхăтĕнче Чемберлен Мюнхена кайса агрессора сăмахсемпе ӳкĕте кĕртме хăтланнă пек, Ганди те часрах Токиона кайма ĕмĕтленет. Конгресс çак вăхăтра маневрсем туса хăтланать». «Манчестер» хаçат çапла палăртать: граждăнла халăхсене Англие пăхăнмалла мар текен политикăпа, Ганди пĕлтернĕскерпе, çавăн пекех Неру та килĕшнĕ.

## ЛĂПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

МЕЛЬБУРН, августăн 7-мĕш. (ТАСС). Союзниксен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Лăпкă океанăн кăнтăр хĕвеланăç пайĕнче японецсем Ару, Тенимбер утравĕсене тата Арафурски тинĕсри Кай утравне оккупациленĕ, çапла майпа японецсем Австрали патне чылай çывхарса пынă. Тенимбер утравĕ Дарвин портĕнчен çурçĕр еннелле 300 миляра кăна ларать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ФЗУ Чебоксарской хлопчато-бумажной фабрики об'являет набор подростков не моложе 16 лет с образованием не ниже 4-х классов

в группы: 1. ткачей,
2. с'емщиц на ватере.

Срок обучения 3½ месяца.

Учащиеся обеспечиваются общежитием, питанием и стипендией.

За справками обращаться в канцелярию школы по адресу: г. Чебоксары, ул. Володарского, дом № 5 (Дом печати) 2-й под'езд, 2-й этаж, ежедневно кроме общевыходных дней.

3—3.

ПРОПАЛА КОБЫЛА гнедой масти, на задней ноге щетка белая, ростом небольшая.

Знающих о местонахождении просьба сообщить по адресу: Калининский район, Ямбахтинский с/совет, дер. Шеркасы, колхозу «Социализм».

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:

Инженеры и техники-технологи по холодной обработке металла, инженер-калькулятор, экономисты, мастер по каменным и штукатурным работам, инженер-электрик по нормализации, чертежники-копировщики, машинистки, бухгалтеры, снабженческие и складские работники.

Рабочие следующих специальностей:

Токари, револьверщики, долбежники, фрезеровщики, шлифовщики, заточники, слесари-инструментальщики, слесари-водопроводчики, слесари по ремонту, слесари-сборщики, лаковары, прессовщики, литейщики, сварщики, штамповщики, электромонтеры, слаботочники, радисты, шлифовщицы, автоматчики, кузнецы-молотобойцы, наборщики, печатники, переплетчики, маляры, печники, каменщики, штукатуры, плотники, столяры, связисты, подносчики, комплектовщики, ящечники, упаковщики, стекольщики, шорники, жестянщики, шофера, подсобные рабочие, уборщицы, грузчики, курьеры.

ПРИНИМАЮТСЯ вахтеры и пожарные работники (мужчины и женщины).

На переквалификацию принимаются по специальностям: слесари, револьверщики, монтеры, наборщики, печатники, строители, а также счетные работники.

Обращаться: ул. Карла Маркса, 80, от 11 до 3 час. дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.

НТ 248